28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАЙ
18
ЫТЛАРИКУН
103(6340) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Наркомземăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

24. **Елчĕк МТС-ĕнчи 1-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ С. С. Карлин).** Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, плана палăртнă 295 гектар вырăнне 320 гектар сухаланă, 315 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

25. **Елчĕк МТС-ĕнчи 2-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ И. Н. Арбузов).** Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, плана палăртнă 316 гектар вырăнне 371 гектар сухаланă, 320 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

26. **Елчĕк МТС-ĕнчи 9-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ И. В. Васильев).** Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, плана палăртнă 295 гектар вырăнне 333 гектар сухаланă, 270 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

27. **Елчĕк МТС-ĕнчи 5-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ А. Гордеев).** Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, плана палăртнă 228 гектар вырăнне 258 гектар сухаланă, 350 килограмм горючи перекетленĕ.

28. **Елчĕк МТС-ĕнчи 14-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ Е. А. Мясников).** Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, плана палăртнă 295 гектар вырăнне 320 гектар сухаланă, 419 килограмм горючи перекетленĕ.

29. **Елчĕк МТС-ĕнчи 3-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ П. В. Долгов).** Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, плана палăртнă 395 гектар вырăнне 398 гектар сухаланă, 219 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

30. **Елчĕк МТС-ĕнчи 15-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ А. Филиппов).** Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, плана палăртнă 394 гектар вырăнне 398 гектар сухаланă, 260 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

31. **Александра Максимовна Андреева**—Чкаловски МТС-ĕнчи трактористка. Вăл урапаллă СХТЗ тракторпа ĕçлесе плана палăртнă 92 гектар вырăнне 160 гектар сухаланă, 300 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

32. **Вăрнар МТС-ĕ (директорĕ П. О. Осипов, политотдел начальникĕ А. С. Ягодкина, старши механикĕ В. К. Ремизов).** МТС çураки вăхăтĕнче плана палăртнă 4.680 гектар вырăнне 4.790 гектар ĕçленĕ, сеялкăна акмалли плана 101 процент тултарнă.

33. **Вăрнар МТС-ĕнчи хĕрарăм трактористкăсен 13-мĕш бригади (бригадирĕ В. И. Иванов).** Бригада çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 128 процент тултарнă, палăртнă 306 гектар вырăнне 392 гектар сухаланă

34. **Тăвай МТС-ĕнчи хĕрарăмсен тракторнăй бригади (бригадирĕ С. К. Хайдков).** Бригада çураки вăхăтĕнче планпа палăртнă 315 гектар вырăнне 335 гектар сухаланă, 345 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕ

Майăн 16-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

Иртнĕ эрнере, майăн 9-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшне çитиччен, сывлăшри çапăçусенче тата тăшман аэродромĕсем çинче нимĕçсен 370 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăтра пирĕн 104 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскисемпе груззсем турттарса пыракан 60 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 10 батарейне тата минометсен 5 батарейне пусарнă, тăшманăн транспортне тата тральщикне путарнă.

* * *

Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем 30 дзотпа блиндажа аркатнă, нимĕçсен 7 орудине тата пулеметсен 18 точкине пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра тăшман пехотăн пĕр батальона çити вăйпа, танксем пулăшнипе, пирĕн позицисене атакăлама икĕ хут хăтланса пăхнă. Пĕр чăсăн боецĕсем гитлеровецсен атакине сирсе пăрахнă. 3 танкне персе çĕмĕрнĕ тата нимĕç пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

Кубанĕн анат пайĕнче пирĕн отрядсем тăшманăн разведка тăвакан отрячĕсем шыв урлă каçма хăтланнине сирсе пăрахнă. Нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 2 пулемет, миномет, 40 винтовка тата автоматсем тытса илнĕ.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн чăссем, артиллерирен персе тăрса, нимĕçсен 3 орудине, груззсем турттарса пыракан 7 автомашинине пĕтерсе тăкнă, тăшман пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă е вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр чăсри снайперсем 56 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Севск районĕнче лейтенант Гриценко юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксем тăшман тылне вăрттăн кĕрсе кайнă. Пуçланса кайнă тытăçура вĕсем нимĕçсен группине пĕтерсе тăкнă, унтан темиçе çынна тыткăна илсе, хăйсен чăçне таврăннă.

* * *

Волхов фронтĕнче тăшман çине артиллерирен тата минометсенчен персе тăнă. Пирĕн подразделенисем нимĕçсен 10 дзотне, 5 блиндажне аркатнă, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ тата 100 ытла нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрядне хирĕç гитлеровецсем карательнăй пысăк экспедици янă. Çĕрле тăшмансем отряда хупăрласа илме пултарнă. Партизансем хăйсене йĕри-тавра тăрса оборонăласа тата тĕл персе, нимĕçсен атакине ăнăçлăн сире-сире пăрахнă. Хăйсене вăйлăн хĕстерсе, совет патриочĕсем тăшмана суптарнă, унтан гитлеровецсене атакăланă та хупăрласа илнĕ. Çĕртен тухнă, хăйсен сыннисене хĕçпăшалне тата обозне упраса хăварнă. 3 кун хушши пынă çапăçусенче нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Çĕнĕ базăна куçнă чухне партизансем халăх пуранакан икĕ пунктри нимĕç гарнизонĕсене аркатса тăкнă, 6 пулемет, винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Словаксен моторизованнăй пĕрремĕш дивизийĕн 20-мĕш полкĕнчи 7-мĕш ротăран Хĕрлĕ Çар енне куçнă Штефан Ондрачка сержант çапла каласа панă: «Чехословаксем нимĕçсене пĕтĕм чун-чĕререн кураймаççĕ, вĕсене çынвĕлеренсем тесе чĕнеççĕ. Гитлерла бандăсем Чехословакие çĕмĕрсе кĕрсен, унта пурнăç тӳсме çук йывăрланчĕ. Вăйшар пин çынна вĕсем тĕрмесене хупрĕç, концлагерьсене илсе кайрĕç. Манăн нимĕçсене вĕсем тискерленнĕшĕн тата ирсĕр преступлени тунисемшĕн тавăрас килет. Гитлерла ăпăр-тапăра таптаса лучăркассине, Чехословакие çĕнĕрен туса хурассине эпĕ шанса тăратăп. Россиăра алла хĕçпăшал тытса нимĕçсене хирĕç кĕрешекен чехословаксен çар чаçĕ пурри çинчен эпир пĕлсе тăнă. Чехословаксен çав чаçăн ăраскалне эпĕ питĕ ăмсанатăп. Вырăссемпе пĕрле вĕсем нимĕçсене хирĕç Чехословаки ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн çапăçаççĕ. Тăван çĕршывшăн гитлеровецсене хирĕç кĕрешесси — вăл чи пысăк телей».

* * *

Аяларахра эпир Германи каторгине вăйпа илсе кайнă совет хĕрĕн Настьăн çырăвне пичетлетпĕр: «Сывă-и, хаклă тăван аннем! Халлĕхе эпĕ чĕрĕ-ха, анчах сывлăхăм пĕрмаях начарланса пырать. Ирхине пуçласа пире сĕм тĕттĕмчченех ĕçлеттереççĕ. Кунта лекнисене пурне те питĕ хĕн. Пире йытăсене хăваланă пек хăвалаççĕ. Темĕнле йывăçпа хутăштарнă çăкăр çитереççĕ. Россиăран пире кунта вилме хăваласа килчĕç. Конвойсăр пĕр утăм та ярса пустармаççĕ. Ĕçре те, бараксенче те тĕрмери пек ларатпăр. Кунне пĕрре яшка параççĕ. Вăл яшка мар, сысна çиекен мăшкăлтăк шыв. Ирпе-каçпа ним те çитермеççĕ, ĕçле те кирек епле пурăн. Кунта çав тери йывăр пирки пурнăç та пурнăç мар. Кунта пурăнса асапланиччен тăван çĕршыва çитсе вилесчĕ. Кунта пирĕнтен мăшкăлласçĕ, пире çын вырăнне те хумаççĕ».

Майăн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕ

Майăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пĕр соединенин артиллерисчĕсем тăшман позицийĕсемпе вĕсен çывăхри тылĕсене персе тăрса, нимĕçсен 8 дзотне аркатнă, артиллерин 4 батарейне пусарнă, груззсем турттарса пыракан 25 автомашинăпа лавсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕç отрячĕ çапăçса пырса пирĕн позицисене тĕпчесе пĕлесшĕн пулнă. Пирĕн подразделенисем ăнăçлă маневр тунипе хупăрласа илнĕ те нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 3 пулемет тата 75 винтовкăпа автомат тытса илнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче старши лейтенант Ботовский юлташ тата старши лейтенант Маслов юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ нимĕçсем йышăннă яла вăркăнса кĕнĕ. Ботовскийĕн ушкăнĕнчи автоматчиксем противотанковăй гранатăсем ывăтса 3 дзотпа 2 землянкăна унта пулнă гитлеровецсемпе пĕрлех сирпĕнтерсе янă. Çав вăхăтра Маслов ушкăнĕ нимĕçсен ялтан тухса каймалли çулне татнă. Кĕске тытăçура тăшман гарнизонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн чăссем тăшмана хирĕç персе тăнă. Нимĕçсен 11 дзочĕпе блиндажне, 3 орудине, боеприпассем тиенĕ 7 автомашинине тата гитлеровецсен пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Могилев облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ пĕр вăхăтрах нимĕçсен 8 гарнизонне пырса тапăннă. Партизансем 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Совет патриочĕсем 10 пулемет, 3 миномет, 120 винтовка тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ, минăсем лартса, апат-çимĕç турттарса пыракан нимĕç эшелонне сирпĕнтернĕ. 16 вагон аркатса тăкнă. Крушени вăхăтĕнче эшелон хуралĕнчи 12 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 20-мĕш мотодивизийĕнчи 76-мĕш пехотнăй полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă Ганс М. салтак çапла каласа панă: «Италипе Германи войскисем Тунисра поражени тӳсни çинчен пĕлтерекен хыпарсем полкри çынсене питĕ хумхантарчĕç. Хĕлле Паулюс армийĕ Сталинград патĕнче катастрофа курчĕ, халĕ тата Арнит армине пĕтерсе тăкнă. Пĕр поражени хыççăн тепри сиксе тухать. Çар телейĕ Германирен кайрĕ, Германи вăйĕсем шутлама пулниччен те хăвăртрах пĕтсе пыраççĕ. Германи командованин сводкисем салтаксене питĕ тарăхтараççĕ. Сводкăсенче яланах çар ĕçĕсем план тăрăх пулса пыраççĕ тесе пĕлтереççĕ. Событисем кирек епле килсе тухсан та, пире яланах нимĕç командованийĕ пĕтĕмпех малтан шутласа хунă тесе ĕнентерчĕ. Салтаксем çакăн пирки халĕ çапла калаççĕ: «Кавказран эпир планпа шутласа хунă план тăрăх чакрăмăр, Паулюс армийĕ те план тăрăх пĕтрĕ. План тăрăх шутласа хунипех Ржев тата Вязьма хулисенчен, Великие Луки тата Демянск хулисенчен тухса кайнă. Халĕ тата план тăрăх шутласа хурсах Тунисран тухса кайнă. Германи çавăн пекех «план тăрăх» вăрçăра та поражени тӳсмелле ĕнтĕ». Нумай салтаксен шухăш-кăмăлĕсем питĕ начар. Нимĕç армин умра нимĕнле ырлăх та курăнманнине кашнийех ăнланать. Англипе Америка вăйĕсем Тунисра пушаннă хыççăн вĕсем ытти фронтсенче çапăçма пултарнипе пушшех те ырă пулас çуккине пĕлсе тăраççĕ»

* * *

Норвеги патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хастарлăн кĕрешсе пыраççĕ. Берген районĕнче норвежецсем нимĕçсен çарпа строительство Тодт организацийĕн склачĕсене çунтарса янă. Осло çывăхĕнче патриотсем 60 гитлеровец ларса пыракан парохода сирпĕнтернĕ. Тронхейм районĕнче Норвеги партизанĕсем тинĕс артиллерин орудийĕсене тиенĕ поезда ӳпĕнтерсе янă. Апрельре Норвеги партизанĕсем концлагере пырса тапăннă. Нимĕç хуралне вĕлерсе тăкса, унта хупса хунă патриотсене пурне те ирĕке кăларнă.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хусан чугунçулĕ çинчи милицин уйрăмăнах палăрнă работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Революциллĕ йĕркене тата общество хăрушсăрлăхне сыхлас тĕлĕшпе чыслăн та хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçленĕшĕн Хусан чугунçулĕ çинчи милицин уйрăмăнах палăрнă çак работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Александр Алексеевич **Гришина**—милицин Улатăр станцинчи линейнăй отделенийĕн милиционерне.
2. Тимофей Захарович **Захарова**—милицин Канаш станцинчи оперативнăй пункчĕн уполномоченнăйĕн помощникне.
3. Мария Андреевна **Князевăна** — милицин Улатăр станцинчи линейнăй отделенийĕн милиционерне.
4. Александр Яковлевич **Кузнецова**—милицин Улатăр станцинчи линейнăй отделенийĕн старши оперативнăй уполномоченнăйне.
5. Никифор Димитриевич **Макарова**—милицин Улатăр станцинчи линейнăй отделенийĕн оперативнăй уполномоченнăйĕн помощникне.
6. Алексей Степанович **Степанова**—милицин Канаш станцинчи оперативнăй пункчĕн старши оперативнăй уполномоченнăйне.
7. Димитрий Семенович **Скаринова**—милицин Çĕмĕрле станцинчи линейнăй отделенийĕн милиционерне.
8. Иван Михайлович **Устюгова** —милицин Улатăр станцинчи линейнăй отделенийĕн начальникĕн заместительне.
9. Иван Иванович **Шарендона**—милицин Улатăр станцинчи линейнăй отделенийĕн начальникне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи майăн 17-мĕшĕ.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ промышленноçăн тивĕçлĕ отраслĕнчи работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи апрельти итогĕсене пăхса тухса, ВЦСПС-па Наркоматăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводрах хăварма йышăннă.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ĔÇÇЫННИСЕМ ХĂЙСЕН СĂМАХНЕ ПУРНĂÇА КĔРТĔÇ

Нумай пулмасть ВКП(б) Обкомне, Чăваш АССР Совнаркомĕпе Верховный Совет Президиумне пирĕн республика шефа илнĕ çар чаçĕн командованийĕ саламлă çыру янă. Вăл çырура çапла çырнă:

«СССР Совнаркомĕ Чăваш республики ялхуçалăхĕнчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1942 çулхи итогĕсем тăрăх мала тухнă тесе йышăннă хыпара пирĕн чаçăн личнăй составĕ пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ. Республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш премин пани орденлă Чăваш республикинчи колхозниксен питех те пысăк патриотизмне, ырми-канми ĕçленине çирĕплетсе парать».

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ тата Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ фронтовиксене ответлă çыру янă. Унта çапла çырнă:

«Чăваш республикинчи ĕççыннисем Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата орденлă республикăн чысне çӳле тытса пыма аслă Сталина тупа турĕç. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăça кĕртĕç тата геройла Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах хĕçпăшал, çар хатĕрĕсем тата апат-çимĕç парса тăрассишĕн мĕнпур вăйĕсене хурĕç.

Сире, фронтовиксем, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре çĕнĕ чаплă ситĕнӳсем тума сунатпăр».

ÇУРАКИНЕ ХĂВĂРТ ТУСА ПĔТЕРСЕ, ТĂПРАРИ НУРЛЕХЕ (СЫХЛАСА) ХĂВАРАР!

Элĕк районĕнчи колхозсем çураки ĕçĕсене вĕçлерĕç

Элĕк районĕнчен ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомне тата ЧАССР Наркомземне çакăн пек телеграмма килчĕ:

«Районри колхозсем майăн 16-мĕшĕнче çураки ĕçĕсене вĕçлерĕç. Планпа 13.843 гектар акмалла пулсан, пурĕ 14.653 гектар акнă. Çураки планĕнчен ирттерсе 804 гектар тырă акса хăварнă; çĕрулмине пурĕ 1.003 гектар çĕрулми лартнă тата 800 гектар кантăр акнă. Халĕ каярах акмалли культурăсем валли тата пахча-çимĕç валли çĕр хатĕрлетпĕр. МТС çуракинчи ĕçсен планне 107 процент пурнăçларĕ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ ФИЛИМОНОВ, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ ФЕДОТОВ, Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ ВОЛКОВ, МТС директорĕ ЯХВАРОВ».

* * *

ЭЛĔК, майăн 17-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Районра çураки ĕçĕсем вĕçленчĕç. Районри колхозниксемпе колхозницăсем çуракинче вăйлăн ĕçлерĕç. Нумай колхозсем çуракине 10 талăк хушшинче туса пĕтерчĕç, çурхи тырăсене пысăк пахалăхпа акса хăварчĕç.

Майăн 16-мĕшĕ тĕлне пурĕ 14.653 гектар акса район çураки планне 105 процент пурнăçларĕ, пăрçа йышши культурăсем акмалли плана 109 процент пурнăçларĕ, çĕршыв оборонин фондне хывма тата нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма çураки планĕнчен ирттерсе мĕн пурĕ 804 гектар çине тĕрлĕ тырăсем тата пахча-çимĕç акса хăварнă.

Район çĕрулми лартмалли плана та ăнăçлăн пурнăçларĕ. План тăрăх кăçал çĕрулми пĕр пин гектар çине лартмалла пулнă, паянхи куна 1.003 гектар çине лартнă.

Çураки уйрăмах «Доброволец», «Броневик», «Заветы Ильича», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче лайăх пулса иртрĕ. «Доброволец» колхоз тырпула пысăк пахалăхпа, 7 талăк хушшинче акса пĕтерчĕ. Сеялкăсемпе туллин пысăк усă курса вĕсем кĕске вăхăтрах 421 гектар тырă акса хăварчĕç. Вăл шутра сеялкăсемпе 60 процент акнă. Колхоз планран ирттерсе 12 гектар тырă акрĕ, ку тырра оборона фондне параççĕ.

«Броневик» колхоз та çураки ĕçĕсене пĕр эрне хушшинче вĕçлерĕ. Планран ирттерсе 36 гектар тырă акрĕ. «14 лет Октября» колхоз тырăсене 8 талăк хушшинче акса хăварчĕ. Халĕ колхозсем пахча-çимĕçсем лартаççĕ. «Заветы Ильича», Киров ячĕпе тăракан колхозсем ирхи çĕртме тума тухрĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз паян ирхи çĕртме сухине 11 гектар сухаларĕ.

Çуракинче трактор бригадисем лайăх ĕçлерĕç. Майăн 15-мĕшĕ тĕлне МТС тракторĕсемпе пурĕ 3.601 гектар сухаланă. Çапла МТС хăйĕн çуракинче ĕçлемелли планне 107 процент пурнăçларĕ.

Мари республикинче çураки ĕçĕсем мĕнле пыраççĕ

ЙОШКАР-ОЛА. (Телеграфпа). Çураки ĕçĕсем республикăра саралсах пыраççĕ. Республика майăн 14-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсемпе пăрçа йышши тата техникăллă культурăсем акмалли плана 47,8 процент тултарчĕ. Малта пыракан Звениговски район ирхи культурăсем акмалли плана пĕтĕмпех тултарчĕ. Горно-Марийски район çураки планне 86 процент, Еласовски район 84 процент тултарчĕç. Еласовски районри орденлă МТС çураки планне 115 процент тултарчĕ, Горно-Марийски, Ронгински МТС-сем хăйсен планне паян-ыранах тултараççĕ.

Малта пыракан колхозсенче çĕрулми лартас ĕç хĕрӳллĕн пулса пырать.

Г. Эрскин.
«Марий Коммуна» хаçатăн ответлă редакторĕ.

Улмуççи сачĕсене çĕнĕрен лартаççĕ

КАЛИНИНО. **(Хамăр корр.).** Колхозсен, колхозниксен ик-виç çул каярах пысăк та лайăх сад пахчисем пурччĕ. Анчах 1941 çулхи сивĕ хĕлле улмуççисем пурте пекех хăрчĕç.

Халĕ районри хăшпĕр колхозсем сад пахчисене тепĕр хут ĕрчетме тытăнчĕç. Ассакассинчи «КИМ» колхоз (председателĕ Аникин юлташ) иртнĕ çуркунне тата кăçал пурĕ 4 пин тĕп улмуççи çĕнĕрен лартрĕ. Иртнĕ çул лартнă улмуççисене кăçал пурне те сыпса хăварнă. Çавнашкалах Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз та хăрнă сад вырăнне тасатса 1.000 тĕп хурлăхан, 120 тĕп улмуççи, Тувайкинăри Мичурин ячĕпе тăракан колхоз кăçал 100 тĕп улмуççи лартрĕç.

Чылай колхозсенче хăрнă улмуççи кăкĕнчен çĕнĕ хунавсем тухаççĕ. Çав хунавсене упраса ӳстерес тĕлĕшпе йывăççене хăрнă туратсенчен тасатаççĕ. Хунав тухнă сыпăксем таран татса пăрахаççĕ.

С. Шадин.

Хула çыннисем пахча-çимĕç лартаççĕ

Ĕç пĕтнĕ хыççăн Шупашкар çыннисем килĕсене васкавлăн утаççĕ. Вĕсен кашниннех 3—4 сехет те пулин участокра ĕçлесе пахча-çимĕç лартса хăварас шухăш.

Вăхăт нумай та иртмест. Научнăй работниксем, партипе совет работникĕсем, рабочисем, служащисем, килхуçи хĕрарăмĕсем алла кĕреçе е катмак илсе уялла тухаççĕ. Кашнин участокĕ çинчех хĕрӳллĕ ĕç пуçланать, хăшĕсем пахча-çимĕç лартма йăрансем тăваççĕ, хăшĕсем çĕрулми лартаççĕ.

Хулари рабочисемпе служащисене пахча-çимĕç туса илме кăçал 146 гектар çĕр уйăрса панă, çав участок çине вĕсем тĕрлĕрен пахча-çимĕç культурисем лартса хăвараççĕ. Уйрăмăнах горпромкомбинат, Наркомюст коллективĕсем хăйсен участокĕсене кĕске вăхăт хушшинчех акса хăварчĕç.

Вăрçăн йывăр кунĕсенче государствăран сахалрах илмелле, ăна ытларах пулăшмалла. Хамăр валли хĕлле çиме çĕрулми, пахча-çимĕç хатĕрлесси—пирĕн хисеплĕ ĕç пулса тăрать, — теççĕ хулари рабочисемпе служащисем.

Ф. Малышкин.

Шкул ситес çулхи вĕри апатшăн тăрăшать

Октябрьскинчи вăтам шкул пахчинче юр кайсанах ĕç пуçланчĕ. Ирхине, занятисем пуçланиччен, тата занятисем пĕтсен кашни вĕренекен шкул пахчинче ĕçлерĕ. Вĕсем çĕрулми, купăста, хăяр, кишĕр лартса хăварчĕç. Пахча-çимĕçсем лартса хăварас тĕлĕшпе кашни вĕренекенех тăрăшса ĕçлерĕ.

А. Хатаевский.

ПОЛИТОТДЕЛСЕМ — ҪУРАКИ ОРГАНИЗАТОРĔСЕМ

Сталин юлташăн приказĕ тата Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пани колхозниксемпе колхозницăсем тата машинно-тракторнăй станцисен работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва вăйлатса яма тата ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшрĕç.

Республикăри колхозсемпе МТС-сенчен чылайĕшĕ çураки ĕçĕсене организованно вĕçлерĕç, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕç.

Паянхи кун тĕлне республикăри 7 машинно-тракторнăй станци — Елчĕк, Йĕпреç, Шăхасан, Комсомольски, Канаш, Вăрнар тата Красноармейски МТС-сем, 124 трактор бригади, 1.479 тракторист, вĕсен шутĕнче 1.035 хĕрарăм, çураки планне ăнăçлăн тултарчĕç. Ку ĕçре коммунистсемпе комсомолецсем малта пычĕç. Трактористсем пулса ĕçленĕ 816 комсомолецран 687-шĕ хăйсен сезонри нормисене тултарчĕç е ирттерсе тултарчĕç.

Уйрăмах Елчĕк МТС коллективĕ (директорĕ Яшин, политотдел начальникĕ Михеев юлташсем) лайăх ĕçлерĕ. Вăл социализмлă ăмăртура плана тултарас енĕпе те, çунтармалли япаласене перекетлес енĕпе те республикăри малти вырăна тухрĕ. Унти 16 трактор бригадинчен 15 бригада, 126 трактористран 82 тракторист сезонри нормăсене ăнăçлăн тултарнă.

Çуракинче хĕрарăм-трактористкăсем хăйсен ĕçне мухтава тивĕç туса пычĕç. Сезонри нормăсене ăнăçлăн пурнăçланăшăн 83 хĕрарăмран 78-шĕ ĕçшĕн хушса преми илме тивĕçлĕ пулчĕç. МТС-ри 53 комсомолецран сезонри задание тултарман пĕр комсомолец та çук. МТС-ри 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа вăтамран 100-шер гектар ытла ĕçленĕ.

Вăрçă условийĕсенче Хĕрлĕ Çарпа халăх хуçалăхĕ валли горючи тата сĕрмелли япаласем ытларах кирлĕ. Çакна шута илсе, Елчĕк МТС-ĕ тата унăн политотделĕ горючине тата сĕрмелли япаласене перекетлес, вĕсене вăрлакансемпе тата усăсăр расходлакансемпе кĕрешес задачăна хăйĕн ĕçĕнчи тĕп задачăсенчен пĕрийĕ тесе шутланă. 1942 çулта МТС нефтепродуктсем 13.843 килограмм перекетленĕ пулсан, кăçалхи çураки вăхăтĕнче кăна 5.000 килограмм ытла перекетленĕ.

МТС-ри Георгий Струнков юлташ ертсе пыракан трактор бригади уйрăмах тухăçлă ĕçленĕ. Унти 15 лаша вăйлĕ кашни трактор вăтамран 141-шер гектар ĕçленĕ, çав вăхăтра бригада 450 килограмм горючи перекетленĕ. Хĕрарăм трактористкăсен 8-мĕш номерлĕ бригади (бригадирĕ П. Марков юлташ) 295 гектар ĕçлес вырăнне 504 гектар ĕçлерĕ, 427 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Малта пыракан трактористкăсем, сăмахран, Раиса Константинова СХТЗ тракторпа хăйĕн сменинче 39 гектар сухалас вырăнне 85 гектар сухаларĕ, 50 килограмм горючи перекетлерĕ.

Шăхасан МТС-ĕнчи трактористсем те халиччен пулман ĕçкленÿпе ĕçлерĕç. МТС-ри 13 трактор бригадинчен 11-шĕ, 88 трактористран 71-шĕ хăйсен сменăри нормисене ăнăçлăн тултарчĕç. Иртнĕ çул ялхуçалăх ĕçĕнче МТС 4.830 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Çак çитĕнÿсене МТС-сен политотделĕсем, партипе комсомол организацийĕсем массăсене лайăх организацилесе ертсе пынипе тунă. МТС-сен политотделĕсем, партипе комсомолăн организацийĕсем çураки пуçланиччен çураки вăхăтĕнче тумалли массăллă-политикăллă ĕçсен планĕсене турĕç; мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсене трактор тата уйĕç бригадисене тĕрĕс вырнаçтарса тухрĕç; кашни бригадăра агитаторсене, стена хаçат редакторĕсене уйăрчĕç, вĕсемпе инструкциллĕ канашлусем туса ирттерчĕç. Агитаторсемпе вулавçăсене стена хаçачĕ кăлармалли макетсемпе вуласа памалли материалсене тупма пулăшрĕç.

Елчĕк МТС-ĕн политотделĕ çураки умĕн тата çуракинчи хĕрÿ ĕçсен вăхăтĕнче агитаторсемпе тата стена хаçат редакторĕсемпе тăватă хутчен семинарсем ирттернĕ. Çураки вăхăтĕнче трактор бригадисенче 96 номер боевой листоксем кăларнă, трактористсем хушшинче 32 доклад тунă.

Мĕнпур бригадăсенче кăтарту хăмисем, витринăсем организациленĕ. Унта кунсерен ĕç итогĕсене çырса пыраççĕ. Трактор бригадисемпе трактористсем хушшинче МТС дирекцийĕпе политотделĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн вăйлă кĕрешÿ пырать. Георгий Струнковăн бригади куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава çураки пуçланнăранпах хăйĕн аллинче çирĕп тытса тăрать.

Шăхасан МТС-ĕнчи агитаторсемпе вулавçăсем тата стена хаçат редакторĕсем те начар мар ĕçлерĕç. Трактор бригадисенче кăна çураки пуçланнăранпа 146 хутчен калаçусем тата 18 доклад туса ирттернĕ, 68 номер стена хаçачĕ кăларнă. Агитаторсем хăйсем паха пример кăтартса тухăçлăн ĕçлеççĕ. Старши тракторист, ВКП(б) членĕ Антон Емельянов тракторпа тумалли ĕçсен планне 200 процента яхăн тултарнă. Вăл çамрăк трактористкăна — Зинаида Ивановăна ĕçе вĕрентнĕ. Иванова юлташ çуракинчи ĕçсен планне ирттерсе тултарнă, бригадăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинчен пĕр вĕçертмесĕр тытса тăрать. Агитатор, ВКП(б) членĕн кандидачĕ Федора Самсонова иртнĕ çул комбайнер помощникĕ пулса ĕçленĕ. Вăл кăçал трактористка пулма экзамен тытнă. Самсонова юлташ çуракинче тумалли ĕçсен планне 150 процент пурнăçласа 80 килограмм горючи перекетленĕ.

Кăçалхи çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планĕсене ăнăçлăн пурнăçлас ĕçре куçса çÿрекен мастерскойсем туни чылай пулăшрĕ. Иртнĕ çул пирĕн республикăри чылай политотделсем куçса çÿрекен мастерскойсем тăвасси çине ответсăрла пăхрĕç. Çавна пула пĕчĕк кăлтăк пулсанах тракторсем нумай вăхăт хушши ĕçлемесĕр ларнисем пулнă. Малта пыракан МТС-сем тата вĕсен политотделĕсем иртнĕ çулхи йăнăша кăçал тÿрлетрĕç. Çапла вара куçса çÿрекен мастерскойсем пулăшнипе трактор паркне йĕркеллĕ ĕçлеттерчĕç.

Анчах МТС-сен хăшпĕр политотделĕсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне кирлĕ пек пурнăçламаççĕ-ха. Шăмăршă, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Улатăр тата Кувакино МТС-ĕсен политотделĕсен начальникĕсем трактористсемпе трактористкăсем тата колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе кирлĕ пек туса пырассишĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ. Вĕсем колхозниксемпе трактористсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва начар ертсе пыраççĕ, колхозниксемпе МТС работникĕсене çураки ĕçĕсене кĕске вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса ирттерме çителĕксĕр мобилизацилесе пыраççĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ Пăрачкав МТС-ĕнче 15 лаша вăйлĕ кашни трактор пуçне 16-шар гектар, Çĕмĕрле МТС-ĕнче — 22-шер гектар, Кувакино МТС-ĕнче—21-шер гектар, Улатăр МТС-ĕнче — 22-шер гектар, Шăмăршă МТС-ĕнче 30-шар гектар çеç ĕçленĕ. Çак МТС-сем кунпа пĕрлех горючине ытлашши пиншер килограмм расходланă. Пăрачкав МТС-ĕ, сăмахран, горючине 3.000 килограмм ытлашши расходланă.

Партипе правительство юлашки уйăхсенче ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх питех те кирлĕ постановленисем йышăнчĕç. Малта пыракан МТС-семпе колхозсем, МТС-сен политотделĕсен партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем çав постановленисене пурнăçлассишĕн кĕрешсе, çураки ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç.

МТС политотделĕсен, партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен малашнехи задачи çакă пулса тăрать: партипе правительство йышăннă постановленисене кашни колхозникпе колхозницăна, МТС работникне тĕплĕн ăнлантарса памалла, çав постановленисене пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

Политотделсен çак ĕçре политикăллă пропагандăпа агитацин мĕнпур майĕсемпе усă курмалла. Калаçусем ирттерсе, хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа парса, стена хаçачĕ, радио, кино урлă ялхуçалăхĕнчи социализмлă ăмăртăвăн ялавне татах çÿлерех çĕклемелле.

Политотделсен коммунистсемпе комсомолецсен вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла.

Коммунистсемпе комсомолецсен çураки ĕçĕсенче тата социализмлă ăмăртура малта пырас пулать. Политотделсен, партипе комсомол организацисен çуракине кĕске срокра тата агротехника хушнă пек лайăх пахалăхпа туса ирттерессишĕн, ака ĕçĕсене çитес ик-виçĕ кун хушшинчех вĕçлесе тăванла республикăсем хушшинчи социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн пыракан кĕрешĕве большевикла ертсе пымалла.

Я. ПЕТРОВ,
ЧАССР Наркомзем Политсекторĕн начальникĕ.

Ÿкерчĕк çинче: пирĕн землякпа — Коротков сержантпа (сулахайри) Костромин старшина. (Вĕсем çинчен «Иккĕн 20 фрица хирĕç» ятлă статьяна вулăр). **П. Сотников** фото-ÿкерчĕкĕ.

ИККĔН 20 ФРИЦА ХИРĔÇ

Разведчик-автоматчиксем — сержант Д. Коротков тата старшина А. Костромин пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Вĕсем хуть те хăçан та пĕрле. Разведкăна яланах пĕрле каяççĕ. Апат-çимĕçе те уйăрса мар, пĕрле çиеççĕ.

Коротков — чăваш, вăрăм пÿллĕ, таса куçлă, хура çÿçлĕ çын. Вăрçăччен колхозри ответлă ĕçре пулнă. Костромин — вырăс, рабочи, Коротков пекех вăйлă çын. Юнашар пынă чухне вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма та хĕн. Сăнĕсем те пĕр пекрех. Çак икĕ юлташа аслă вăрçă çывхартса туслаштарнă.

Нумай пулмасть пирĕн полк, наступлени туса, нимĕçсене икĕ ялтан хăваласа кăларчĕ. Наступлени тăвас умĕн хуть хăçан та разведчиксем тăшманăн вăйне, вăл хăш вырăнта тăнине тĕпчесе килеççĕ. Коротковпа Костромин ку расра та разведкăна кайма килĕшрĕç. Вĕсем пирвайхи хут мар, темиçе хутчен те нимĕçсем патне «кайса çÿренĕ» ĕнтĕ. Хăнахнă ĕç. Туссем ĕçе юратаççĕ. Йăнăш тăвас çук.

...Полк наступленине кайма хатĕр. Анчах разведчиксем килсе çитеймерĕç-ха. Полкри кашни красноармеец, командир разведчиксем таврăнассине тата наступленине кайма приказ пулассине кĕтет.

Сасартăк фронт умĕнче çын мĕлкисем курăнчĕç. Шутлатпăр: пĕр çын, иккĕ, виççĕ, пиллĕк... çиччĕ. Пирĕн боецсем мĕн пулса тухнине ăнланаймасăр пĕр-пĕрин çине ун-кун пăхкаласа илчĕç. Ара, разведкăна Коротковпа Костромин — иккĕн çеç кайнăччĕ-çке, килессе çиччĕн килеççĕ! Лайăхрах пăхăр-ха: Коротковсемех-ши, тен вĕсем мар?

Акă çывăхах çитрĕç. Пăхатпăр: Коротковпа Костроминах, пиллĕк фрица тыткăна илнĕ те, илсе килеççĕ. Фрицĕсем пуçĕсене чиксе утаççĕ, хăйсем пылчăк çине выртса йăваланнă сыснасем пекех вараланса пĕтнĕ.

— Пиллĕк «чĕлхе» илсе килтĕмĕр, — тесе рапортларĕ Коротков командира. — Пирĕн çине 20 фриц тапăнчĕç. Пире тытса илесшĕн танаçланчĕç. Вунпиллĕкĕшне «леш тĕнчене» ăсатрăмăр. Çак сĕмсĕрсене (вăл аллисемпе 5 фриц çине тĕллерĕ) хамăрпа пĕрле илсе килтĕмĕр...

— Татах тепĕр виççĕшне илсе килнĕ пулăттăмăр та, çите терĕмĕр. Мĕн тăвас вĕсемпе? Вĕсем Совет Союзне çĕр илме килнĕ, эпир вĕсене аршăн çурă чухлĕ çĕр патăмăр. Çĕрччĕр... — хушса хучĕ Костромин тăрăхнипе.

Унтан вĕсем пире хăйсем 20 фрица хирĕç мĕнле çапăçни çинчен кĕскен каласа пачĕç, командирсене разведка материалĕсемпе паллаштарчĕç.

Ун хыççăн полк наступленине кайрĕ. Ĕç ăнăçуллă пулчĕ. Икĕ сехетрен ялсене нимĕç вăрă-хурахĕсенчен тасатрăмăр. Тăшман хĕвеланăçнелле чакрĕ.

Тĕплĕн разведка тунăшăн, фрицсене хăюллăн тыткăна илнĕшĕн командовани Коротковпа Костромин разведчиксене Правительство наградине пама тăратнă.

М. Данилов-Чалдун.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

ÇАР ПРЕДМЕЧĔПЕ ПĔЛÿ ТĔРĔСЛЕВĔСЕНЕ ЛАЙĂХ ХАТĔРЛЕНСЕ ИРТТЕРЕР

1942—43 вĕренÿ çулĕн программине çар предметне кĕртнĕ май, кăçал туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче малтанхи хут çар предмечĕпе пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пулса иртеççĕ. Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе Облвоенкомат республикăри шкулсене çар предмечĕ тăрăх пĕлÿ тĕрĕслевĕсем ирттермелли инструкцисем ярса панă. Халĕ пур районсемпе хуласенчи çутĕç пайĕсемпе военкоматсенче те военруксемпе шкул директорĕсен канашлăвĕсене ирттереççĕ. Унта çар предмечĕ тăрăх пĕлÿ тĕрĕслевĕсене мĕнле ирттермелли синчен ăнлантарса параççĕ.

Районсĕç пайĕсемпе шкул директорĕсен çар предмечĕ тăрăх пĕлÿ тĕрĕслевĕсем ирттерессие çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Мĕншĕн тесен ку тĕлĕшпе пирĕн шкулсен халиччен опыт çук, тепĕр енчен республикăри военруксенчен чылайĕшĕ ку ĕçре пуçламĕш çул ĕçлеççĕ-ха. Çавăнпа шкул директорĕсемпе вĕренÿ пайĕн заведующийĕсен тата опытлă учительсен военруксене пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерме пулăшас пулать.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсене комплекспа — çар предмечĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсем тăрăх пĕр харăсах тата тулти условисенче ирттермелле. Çакă вăл, паллах, ытти предметсемпе пулса иртекен тĕрĕслевсенчен ытларах йывăрлăх кÿрет.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсене кăтартуллăн ирттерес тесен, хатĕрленÿ ĕçĕсене тĕплĕн тăвас пулать. Пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пуçланас вăхăтчен военрукăн пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттермелли вырăна палăртас пулать. Унта вĕренекенсен пĕлĕвĕсене тактика тĕлĕшĕнчен пур енлĕн те тĕрĕслеме май пултăр.

Тĕрĕслевсен пахалăхĕ çар предметне сăмах вĕççĕн пĕлнинче кăна мар, вĕренекенсем хăйсем вĕреннине туса кăтартма пĕлнинче пулса тăрать. Çавăнпа та военрукăн тĕрĕслев ирттерме кирлĕ пулакан мĕнпур пособисене (винтовка, граната, противогаз, телефон аппаратчĕ т. ыт. те) хатĕрлесе хурас пулать.

Çавăнпа тĕрĕслевсен расписанийĕсене тунă чухне шкул директорĕсемпе райсутĕç пайĕсен заведующийĕн çакна асра тытас пулать. Тĕрĕслеве ирттерме кирлĕ пособисем пур-и, çук пулсан вĕсене çывăхри шкулсенчен вăхăтлăха илсе пымалла тăвас пулать.

Çар предмечĕн программин хăшпĕр темисем тăрăх пĕлĕве тĕрĕслеме уйрăм билетсем çырса хатĕрлес пулать. Вăл билетсенче хĕçпăшалăн пайĕсем, санитари элеменчĕсем, телефонпа телеграф синчен т. ыт те ыйтусем пулмалла.

Вĕренÿ программин хăшпĕр темисем тăрăх вопросник кăна хатĕрлес пулать. Вопросникe питех те тимлĕн тăвас пулать: унта вĕреннĕ материалсем сиксе ан юлччăр, çавăн пекех вĕренмен материалсене те хушса хума юрамасть. Вопроснике кашни класс валли тăвас пулать.

Билетсене мĕнле хатĕрлемелле-ха? Билета уйрăм темăсенчен илнĕ пĕрер ыйту кĕртес пулать. Билетра 4 ыйту таран пулма пултарать.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнче военрука ассистентсем пысăккăн пулăшма тивĕç. Ассистентсем пулма военкоматсен тата çар чаçĕсен представителĕсене уйăрса лартас пулать. Ассистентсен аллинче класри вĕренекенсен спискĕ пулмалла. Вĕсем вĕренекенсем ыйтусем çине мĕнле ответленине шута илсе отметка лартмалла. Ассистент вĕренекенсене ыйтусем пама та пултарать. Анчах ассистентăн активлăхĕ военрукăн рольне пĕрре те чакарма тивĕç мар. Тавлашуллă ыйтусене татса панă чухне военрукăн сăмахĕ татăклă пулса тăрать.

Вăтам шкулсен 10-мĕш класĕсенче тата техникумсемпе училищĕсен 3-мĕш курсĕнче вĕренекенсен пĕлĕвĕсене ятарласа тунă комисси тĕрĕслет. Комисси пуçĕнче шкул, училище е техникум директорĕ тăрать.

Çар предмечĕпе пĕлÿ тĕрĕслевĕсене лайăх хатĕрленсе ирттерессишĕн кĕрешер!

Б. КИПЯТКОВ.
ЧАССР Наркомпросĕн çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ.

Пирĕн авиаци Гомельпе Орел чугунçул узелĕсене тапăнни

Майăн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Гомельпе Орел чугунçул узелĕсене вăйлăн пырса тапăннă. Тăшманăн боеприпассем, горючи, çар техники хунă склачĕсем çине, çар эшелонĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Гомельри чугунçул çинчи Сортировочная, Товарная тата Пассажирская станцийĕсенче ун чухне чугунçул эшелонĕсем вуншар эшелон тăнă. Бомбăсем пăрахнине пула чугунçул узелĕ районĕнче 30 çĕрте ытла пушарсем тухнă, вăйлă взрывсем пулнă. Сăнаса тăракансем боеприпассен эшелонĕсем çунса сирпĕннине уççăнах курнă.

Орелти чугунçул узелĕнче бомбăсем пăрахнине пула нумай çĕрте пушарсем тухнă. вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн авиаци Брянск, Кременчуг тата Днепропетровск чугунçул узелĕсене тапăнни

Майăн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Брянск, Кременчуг тата Днепропетровск чугунçул узелĕсене пырса тапăннă.

Брянск чугунçул узелĕнче бомбăсем тÿрремĕнех ÿкнипе тăшманăн чугунçул составĕсене сирпĕнтернĕ. 30 тĕлте ытла пушар тухнă, вăйлă взрывсем пулнă.

Кременчуг тата Днепропетровск чугунçул узелĕсенче бомбăсем пăрахнипе пула нумай пушарсем тухнă. Чугунçул эшелонĕсемпе складсем çуннă. Пушарсемпе пĕрлех вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте, пĕр самолетсăр пуçне, хăйсен базисене таврăннă.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсем майăн 14-мĕшĕнче Германири, Çурçĕр Голландири тата Бельгири паллă объектсене тăватă хутчен пырса тапăннă. Америкăн вăтам бомбардировщикĕсем Велсенри (Голландия) промышленность объекчĕсене атакăланă. Йывăр бомбардировщиксен чылай пысăк соединенийĕ Кильри подводнăй лодкăсен верьфне атакăланă. Бомбардировщиксен тепĕр отрячĕ Антверпенри «Дженрал моторс» фирмин заводне тапăннă, Куртри (Бельгия) истребительнăй авиацин аэродромне тата ремонтнăй мастерскоя атакăланă.

Союзниксен çывăх хĕвелтухăçĕнчи сывлăшри вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, майăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин йывăр бомбардировщикĕсем Мессинăна (Сицилия) пырса тапăннă. Бомбăсем чугунçул станци районĕнче çурăлнă.

АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕМ ÇУРÇĔР ФРАНЦИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ майăн 13-мĕшĕнче кăнтăрла Çурçĕр Франциe тапăннă. Союзниксен 8 самолечĕ каялла таврăнман. Бомбардировщиксем промышленноçри паллă обьекта тата аэродрома атакăланă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ЭМДЕНА ТАПĂННА

ЛОНДОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 15-мĕшĕнче кăнтăрла Америка авиацийĕ Германие вăйлăн пырса тапăннă. Эмден порчĕн сооруженийĕсем çине тата Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ обьектсем çине бомбăсем пăрахнă. Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн официальнăй йĕркепе пĕлтернинче çакна палăртнă: çанталăк япăх пулнă пулин те, бомбăсем пăрахнин результачĕсем ăнăçлă пулнă.

АНГЛИ ФЛОЧĔ ИТАЛИН ПАНТЕЛЛЕРИ УТРАВĔ СИНЕ ПЕНĔ

ЛОНДОН, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине Англин çар карапĕсем виççĕмĕш хут Сицили проливĕнчи тĕреклетнĕ Пантеллери утравĕ çине пенĕ. Тăшман порчĕ çывăхĕнчи çапăçу 20 минутăран ытла мар пынă, унта пысăк аркатусем тунă. Флотăн çав операцине тинĕс-çар авиацийĕпе таччăн çыхăнса туса ирттернĕ.

АНГЛИ ОБЩЕСТВЕННОÇĔ СОВЕТ СОЮЗНЕ ПАНА МЕДИЦИНА ПУЛĂШĂВĔ

ЛОНДОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр арăмĕ Черчилль госпожа пуçарса янипе «Российăна пулăшмалли фонда» 3 миллион кĕрепенке стерлинг укçа пухнă. Хаçат каланă тăрăх, Англири Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕсем Совет Союзне медикаментсем, хирурги инструменчĕсем тата ытти япаласем 3 пин тонна ытла янă.

ЛИОНРИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ТЫТĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 13-мĕшĕнчи каçхине Лион урамĕсенче халăхпа оккупантсем хушшинче хĕçпăшаллă тытăçусем пулса иртнĕ. 5 çынна вĕлернĕ, 40 çынна ытла амантнă. Германи войскисемпе полици хулан пĕр районне хупăрласа илнĕ. Унта хĕçпăшалсен складне тата вăрттăн ĕçлекен типографи тупнă пулнă.

ФРАНЦИРЕ ХИРĔÇ ТĂРАКАН ВĂРТТĂН КОМИТЕТ ТУНĂ

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Оккупантсене хирĕç кĕрешекен Францири вăрттăн ĕçлекен патриотла организацисем Францин хирĕç тăракан советне туса хунă. Вăл совета «Ирĕке кăларасси», «Çапăçу», «Ирĕклĕ стрелоксем» организацисен представителĕсем, Çурçĕр Францири партизан групписен делегачĕсем, профсоюз организацийĕсен тĕрлĕ представителĕсем, политикăллă 6 партин представителĕсем, вăл шутра социалистла, радикал-социалистла тата коммунистла партисен представителĕсем кĕнĕ.

Францин хирĕç тăракан совечĕ де Голль патне послани янă. Унта вăл де Голле тата Францин пĕтĕм наци комитетне совет вĕсем хÿтĕлекен принципсене вĕçне çитиччен парăнни çинчен калать тата вăхăтлăх правительство тăвассине хăвăртлатма ыйтать. Вăл правительство пуçĕнче де Голль пулмалла, хĕçпăшаллă вăйсене ертсе пыраканĕ Жиро пулмалла, тенĕ.

Пĕлтерÿ

Майăн 18-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) ыйтусемпе ответсен вечерĕ пулать. Ыйтусене Парткабинетра тата ВКП(б) Горкомĕнче йышăнаççĕ.

Вечера вулавçăсене, агитаторсене, пропагандистсене, агитколлективсен руководителĕсене тата итлес текенсене пурне те чĕнеççĕ.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбиначĕ лартмашкăн улмуççи, хурлăхан тата хăмлаçырли йывăççисем кирек мĕн чухлĕ сутать.

Шупашкарти эрех комбинатне ялхуçалăхĕнче ялан ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Пĕчченнисене общежити параççĕ, столовăй пур, кашнине хăйшĕн пахча-çимĕç лартса тума çĕр участокĕ параççĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи Коопинстрахкассăна старши бухгалтер, счетовод, ĕçе сыхлакан инспектор тата инструктор кирлĕ.
Занятисен вăхăтĕнче çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Максим Горький урамĕ, 32-мĕш çурт.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТРА çакăн пек работниксем кирлĕ: администратор, бухгалтер сторожсем, дворник, билетерсем, уборщицăсем художник, паровăй отоплени механикĕ, водопроводчик, полотер-вахтер.
1—3

Государство учрежденине çакăн пек работниксем кирлĕ: снабжени енĕпе ответлă исполнитель, строительствăри кладовщиксем, снабжени агенчĕсем, сторожсем.
Учрежденире столовăй пур.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Володарский урамĕ, Пичет çурчĕ, 2-мĕш этаж, 17-мĕш пÿлĕм.
2—2.

Наркомздрава ялан ĕçлеме агроном кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, К. Маркс урамĕ, 3, 2-мĕш этаж, 6-мĕш пÿлĕм.

14-мĕш номерлĕ почта ещĕклĕ объекта гл. бухгалтер, счетовод, экономист, кадрсем енĕпе тата мобилизаци енĕпе ĕçлекен инспектор, слесарьсем, электромонтерсем, машинистсем, электросварщиксем кирлĕ.
6—02 номерлĕ телефонпа (икĕ звонок) 8 сехетрен пуçласа 10 сехетчен тата 17 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26. парти пурнăç пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.